Приложение к ООП ООО

# Рабочая программа

# внеурочной деятельности «Чĕвĕлти чĕлхе”,

# 7 класс

**Харкамлӑх результачӗсем** :

1) тӑван чӗлхе чӑваш халӑхӗн пурлӑхӗ пулнине, Чӑваш Республикинче вырӑс чӗлхипе тан патшалӑх чӗлхи пулнине ӑнланни; тӑван чӗлхепе ӳлӗмрен кулленхи пурнӑҫра, суйласа илнӗ профессире усӑ курма пултарни;
2) чӑваш чӗлхин илемлӗхне хаклама пултарни, тӑван чӗлхене хисеплени, унпа мӑнаҫланни; чӑваш пуплевӗн нормисене наци культурин пуянлӑхӗ шайне лартса сыхласси кашни чӑвашшӑн пысӑк тивӗҫ тесе йышӑнни; пуплеве куллен кун аталантарма тӑрӑшни;
3) шухӑшпа туйӑма палӑртма усӑ куракан сӑмахсем, грамматика хатӗрӗсем пуплевре йышлӑ пулни; ача хӑй пуплевне ( калаҫнине те ҫырнине те) сӑнаса тивӗҫлӗ хак пама пултарни.

**Пур предмета та вӗренме кирлӗ результатсем**:

1) пуплевӗн мӗн пур тӗсӗпе усӑ курни:
- сӑмахпа каласа е ҫырса пӗлтернӗ информацие тӗрӗс ӑнланни;
- вулавӑн тӗрлӗ мелӗпе усӑ курни;
- тӗрлӗ ҫӗртен (хаҫат-журналтан,Интернетран, радиопа телевиденирен т.ыт.те) килекен материалпа паллашса информации пухма пултарни;
- ку е вӑл темӑпа ҫыхӑннӑ материала вуласа е илтсе тупма, ӑна пухса, тишкерсе, кирлине суйласа илме пултарни; пухнӑ информацие сыхлама, улӑштарма тата кирлӗ ҫӗрте усӑ курма пултарни (информации ҫӑл куҫӗ хаҫат-журнал, тӗрлӗрен техника хатӗрӗ пулма пултарать);
- пӗчче е ушкӑнпа тумалли вӗренӳ ӗҫӗн тӗллевне, йӗркине ӑнланса илни, ӗҫ результатне каласа е ҫырса хаклама пултарни;
- шухӑша сӑмах вӗҫҫӗн е ҫырса ирӗклӗ те тӗрӗс уҫса пама пултарни;
- тантӑшсем умӗнче пӗчӗк е пысӑкрах доклад тума хӑнӑху пурри;

2) вӗренӳре илнӗ тӗрлӗ пӗлӳпе, нумай-нумай хӑнӑхупа яланхи пурнӑҫра усӑ курни; тӑван чӗлхене вӗренсе тухнӑ пӗлӳпе тата хӑнӑхупа ытти предмета ( тӑван мар чӗлхесене, литературӑна т.ыт.те) вӗренме усӑ курни;

3) калаҫнӑ май, пӗр-пӗр ӗҫ тунӑ чух е мӗнле те пулин тавлашуллӑ ыйтӑва сӳтсе явнӑ чух ҫынсемпе тӗрлӗ ҫыхӑнӑва кӗме хӑнӑху пурри; пӗр-пӗр йӗркепе иртекен хутшӑнура е яланхи калаҫура наци культуринче ҫирӗпленнӗ пуплев нормисене пӑхӑнни.

**Предмета вӗреннин результачӗсем:**

1) чӑваш чӗлхи чӑваш халӑх чӗлхи, хамӑр республикӑра патшалӑх чӗлхи ( вырӑс чӗлхипе пӗрле) пулнине ӑнланни; тӑван чӗлхепе культура хушшинче тачӑ ҫыхӑну пурине пӗлни; чӑваш чӗлхи уйрӑм ҫынпа общество пурнӑҫӗнче мӗнле вырӑн йышӑннине ӑша хывни;
2) тӑван чӗлхене пӗлни чӑваш культуришӗн, халӑх пуласлӑхӗшӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнине, ҫавӑнпа чӗлхене вӗренме тивӗҫ пурине ӑнланни;
3) пуплевӗн тӗрлӗ тӗсӗпе усӑ курма пултарни:
*илтнине ӑнланни тата* вулав *хӑнӑхӑвӗ:*

• сӑмахпа каласа е ҫырса пӗлтернине (текст тӗллевне, темине. тӗп тата хушма информацине) кирлӗ пек ӑнланни:

• стильпе жанр енчен мӗнле пулнине пӑхмасӑр текста вулавӑн тӗрлӗ тӗсӗпе (ҫиелтен пӑхса тухни, паллашмалла пахса тухни, вӗренни) усӑ курни;

• вуланӑ текста информаци енчен улӑштарса ҫӗнетме (план тума, тезиссем ҫырма) пултарни; кӗнекепе, хаҫат-журналпа ӗҫлеме пӗлни;

• словарьсен тӗрлӗ тӗсӗпе, пӗлкӗчсемпе (вӑл шутра электрон носителӗ кӗртнисемпе) усӑ курма хӑнӑху пурри:

• стильпе жанр енчен расна текстсене ҫын вулани тӑрӑх ӑнланни: аудированин тӗрлӗ тӗсне (тулли ӑнланни, тӗп содержанине ӑнланни, кирлӗ информацие суйласа илни) алла илни;

• пуплев сыпӑкӗсене содержани, функци, усӑ курнӑ чӗлхе хатӗрӗсем тӑрӑх танлаштарма пултарни;

*сӑмах вӗҫҫӗн калани тата ҫырни:*

• итленӗ е вуланӑ текста пӗр-пӗр виҫепе кӗскетсе (улӑштармасӑр, план туса, тезис хатӗрлесе) каласа е ҫырса пани;

• шухӑша сӑмахпа каласа тата ҫырса ирӗклӗн те тӗрӗс уҫса пама пултарни; текст тытӑмне тӗрӗс тытса пыни (логикӑлӑх, шухӑш юхӑмӗн йӗркелӗхӗ, ҫыхӑнулӑх пурри, темӑпа килӗшсе тӑни); ҫыраканнин пурнӑҫри пулӑмсем ҫинчен, вулани-илтни ҫинчен хӑй шухӑшне калама хӑнӑху пурри;

• стильпе тӗсне, хутшӑну тӗллевне, лару-тӑрӑвне шута илсе сӑмахпа каласа е ҫырса ку е вӑл йышши текст хайлама пултарни; хутшӑну задачисене кура ку е вӑл чӗлхе хатӗрӗ суйласа илсе пӗр-пӗр жанр законӗсем тӑрӑх текст (калав, хаклав, ҫыру, расписка, шантару, заявлени) тума пултарни;

• монологпа диалог тӗсӗсене пӗлни; ачан хӑйӗн тантӑшӗсем умӗнче кӗске хыпар вуласа пама, доклад тума хӑнӑху пурри;

• пуплевре литература чӗлхин орфоэпи, лексика, грамматика нормисене тытса пыни; сӑмахсемпе пӗлсе усӑ курни; ҫырура орфографипе пунктуаци правилисене пӑхӑнни;

• ҫынсемпе калаҫнӑ чух пуплев этикетне шута илни; чӗлхе хатӗрӗсем вырӑнне пуплев хатӗрӗсемпе (мимикӑпа, алӑ хусканӑвӗпе) вырӑнлӑ усӑ курни;

• кашни хӑйӗн пуплевне сӑнаса тӗрӗслесе тӑма, содержани, чӗлхе енчен, хутшӑну тӗллевне пурнӑҫлас тухӑҫлӑхӗ енчен хаклама пултарни; грамматикӑпа пуплев йӑнӑшӗсене тупма, тӳрлетме пултарни; харпӑр хӑй тунӑ текста лайӑхлатма тата редакцилеме пултарни;

4) чӑваш чӗлхине тӗпчекен ӑслӑлӑхӑн никӗсне ӑша хывни; чӗлхен шайӗсемпе единицисем хушшинчи ҫыхӑнусене ӑнланни;

5) чӗлхе ӑслӑлӑхӗн тӗп ӑнлавӗсене алла илни: чӗлхе вӗрентӗвӗ тата унӑн тӗп пайӗсем; чӗлхе тата пуплев, пуплевпе усӑ курса хутшӑнни, калаҫу тата ҫыру; монолог тата диалог; пуплев ситуацийӗ; пуплевӗн функципе шухӑшран килекен тӗсӗсем (калав, сӑнлав, ӑслав); текст; чӗлхе единицисем, вӗсен паллисем тата пуплевре усӑ курнӑ чухнехи уйрӑмлӑхӗсем;

6) сӑмаха фонетика, тытӑмӗ, пулӑвӗ, лексика енчен тишкерме пӗлни, сӑмах майлашӑвӗпе предложение синтаксис енчен тишкерни; текста ун содержанийӗ, тӗп паллисемпе тытӑмӗ

енчен, пуплевĕн функцире паларакан тĕсĕсене кура, чĕлхе уйрăмлăхĕсене пăхса, илемлĕх хатĕрĕсене шута илсе тишкерни;

7) тăван чĕлхен эстетика функцине ăнланса илни, илемлĕ литература тексчĕсене тишкернĕ май пуплев единицин илемлĕхне курма пĕлни.

**Вĕренекенсен пултармалли тата пултараяслăх результачĕсем**

**Ачасен çаксене тума пултармалла**

- Кĕнекепе, словарьсемпе тата ытти пĕлӳ хатĕрĕсемпе, вĕсен шутĕнче хаçат-журналпа тата Интернетпа, ĕçлеме хăнăхăвĕ пулни;

- вулавăн пур тĕсне те алла илни (ăнланулла, паллашулла, тишкерӳллĕ (пăхса тухни) вулав) тата вуланă материала ăша хывни;

- аудированин мĕн пур тĕсĕпе ĕçлеме пултарни (мĕн пурне ăнланса, тĕп содержанине ăнланса, хăш-пĕр информацие суйласа илсе) тата чĕлхен тĕрлĕ функциллĕ уйрăмлăхне шута илсе текста тĕрĕс информацилени;

- текстсене кирлĕ пек ăнланма, шухăшне тĕрĕс уçса пама тата текст тĕсĕсене шута илсе (калав, сăнлав, ăслав) ăнлантарса пама пултарни;

- полилогра тата диалогра хутшăнма, калаçу тĕллевне, ситуацине, сферăна кура чăваш литература чĕлхин нормисене тата пуплев этикетне тытса пырса монолог тума пултарни;

- чăваш литература чĕлхин тата пуплев этикечĕн нормисене шута илсе тĕрлĕ жанрлă,

стильлĕ текстсене йĕркелеме пĕлни тата редакцилеме пултарни; - текстăн тĕп шухăшне, темине, тĕллевне ăнланса текста тишкерме пĕлни; - сăмахсене сыпăксем çине пайлама; - сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене тĕрĕс куçарма; -синонимлă формăсемпе тĕрĕс усă курма; -чĕлхен нормине (орфоэпи, орфографи, лексика, грамматика нормисене) пăхăнма; - калаçура этикет нормисене пăхăнма; - орфографи тата пунктуаци правилисене тĕрĕс усă курса çырма; -тӳрĕ пуплеве тӳрĕ мар пуплеврен уйăрма; -сасăпа сас паллисене уйăрма, сасăсене ушкăнлама; хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхне, янравлăхĕпе янăравсăрлăхне, вăрăмлăхне çырура палăртма;-тăван сăмахсемпе вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене тĕрĕс ударенипе калама;

-сăмах пĕлтерĕшĕсене ăнлантарма, синонимсем, антонимсем е омонимсем тупма; синонимсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма;-иккĕмĕшле сăмахсене пĕрремĕшли-

сенчен, сăмах тăвакан аффикссене сăмаха улăштараканнисенчен уйăрма;

- сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарма;

- хутлă предложенисене хутсăррисенчен уйăрма;

- текст планĕ тума, текстăн темипе тĕп шухăшне палăртма;

- текст содержанине кĕскен тата тĕплĕн каласа пама;

- чăваш литература чĕлхине пĕлме тата унпа тĕрĕс усă курма;

- таврари япаласене е чĕр чунсене сăнласа пама, пурнăçри пулăмсем е ĕç-пуç çинчен мĕн шутланине каласа пама;

-шухăша йĕркипе, вĕçе-вĕçĕн каласа е çырса пама, сăнарлă мелпе усă курма, пĕр-пĕр сăмахпа вырăнсăр усă курассинчен хăтăлма;

- тĕрлĕ словарьсемпе усă курма.

- сайра тĕл пулакан сăмахсен пĕлтерĕшĕсемпе словарь тăрăх паллашса вĕсене пуплеве кĕртсе пыма;

-вĕреннĕ пуплев пайĕсенчи иккĕмĕшле сăмахсем епле пулнине ăнлантарма, тухăçлă тата тухăçсăр аффикссемпе усă курма;

-вĕреннĕ пуплев пайĕсен формисемпе пуплевре тĕрĕс усă курма;

-сăпайлă калаçăва тирпейсĕрринчен, кăмăллине кăмăлсăрринчен уйăрма пĕлмелле;

-чĕлхери сăмахсене май пур таран пуплев пайĕсем çине уйăрма, пуплев пайĕсен уйрăмлăхĕсене кăтартма пултармалла;

-пуплев пайĕсен тĕрлĕ формисемпе вырăнлă усă курма;

-предметра усă куракан чĕлхе единицисене пĕр-пĕринчен уйăрма, вĕсене ăнланма, унсăр пуçне хăйсен ĕçĕсене хак пама, çырнине тĕрĕслеме тата тĕрĕс информаци пама;

-сăмах майлашăвĕпе предложени хушшинчи уйрăмлăхсене ăнлантарма;

-анлă сăмах майлашăвĕсене ансăррисенчен уйăрма;

-сăмах çыхăнăвĕн мелĕсене палăртма;

-предложенири шухăш тĕшшине тупма;

-предложенири сăмахсене предложенин шухăшне кура йĕркелеме;

-ыйтăва сăпайлăрах тума;

-предложение членсем тăрăх тишкерме;

-хутсăр тата хутлă предложенире чарăну паллисене тĕрĕс лартма, вĕсене ăнлантарма;

- сăмахсене лексика тата морфологи тишкĕрĕвĕ тума, сăмах тытăмне пĕлме, хутсăр тата хутлă предложенисене тишкерме;

- ĕç хучĕсем çырма.

**Ачасен пултараяслăхĕ**

- Палăртнă результат тăрăх калаçу ситуацийĕпе ăнăçулăха пăхса хăй тухса калаçнине тишкерме; калаçу ăнăçсăрлăхĕн тĕп сăлтавĕсене ăнланма тата ăнлантарма пултарни;

- сăмахсене тĕрĕс, вырăнлă тата илемлĕ калас тĕлĕшĕнчен пăхса хăйĕн тата ют çын калаçăвне хак пама пултарни;

- чĕлхен илемлĕх мелĕсене пĕлни;

- конспект, хаклав, тезис, реферат, статья, рецензи, доклад, интервью тата ытти ĕçлĕ çыру е ĕç хучĕсене çырма пултарни;

-пĕр-пĕр темăпа доклад тума, тухса калаçма пултарни;

- тĕрлĕ калаçăва хутшăнма, хай шухăшне аргументсемпе çирĕплетсе пама пултарни;

- сăмах тымарне тупса малалла пĕр тымарлă çĕнĕ сăмахсем тума пĕлни;

- сăмах пĕлтерĕшне этимологи енчен ăнлантарма, кашни сăмах пĕлтерĕшне (лексика пĕлтерĕшĕ тата çырас енчен те) ăнлантарма пĕлни;

- хăйсем тĕллĕн вĕренӳ тĕллевне палăртма, хăйсем валли вĕренӳре аталанас тĕлĕшпе çĕнĕ задачăсем лартма, йĕркелеме; хăйсен пултарăслăхне, интересĕсене аталантарма; эффектлă мелсем суйласа илсе хăйсен тĕллевне пурнăçлама пултарни.

**Кружок содержанийĕ**

| **Содержани** | **Формисем** | **Ĕç тĕсĕсем** |
|---|---|---|
| Çырури йăнăшсем | Лекци-калаçу | Вĕрентекен лекцине итлеме, текст тума хăнăхаççĕ |
| **Орфографи йăнăшĕсем** | | |
| - Вырăс чĕлхинчен çыру урлă йышăннă сăмахсем | Ыйтусемпе хуравлă калаçу | Тĕрĕс хурав тата ыйту пама хăнăхаççĕ |
| - Б,г,д,ж,з,ц,щ,о сас паллисене çырасси | Шырав | Орфорграфи словарĕпе ĕçлеме хăнăхаççĕ |
| - Вырăс чĕлхинчи зь,сть,сь сасăпа пĕтекен сăмахсем | Тĕпчев | Тĕпчев ĕçĕ тума хăнăхаççĕ |
| - Вырăс чĕлхинчен пуплев урлă йышăннă сăмахсем | Çавра сĕтел | Диалогпа усă курма хăнăхаççĕ |
| - Сăмах тĕпĕнче вăрăммăн илтĕнекен хупă сасăсем | Интервью | Интервью мелĕпе усă курса калаçма вĕренеççĕ |
| - Сăмахпа аффикс пĕрлешнĕ çĕрти вăрăм хупă сасасем | Калаçу | Калаçура сăмах йĕркине тĕрĕс тытса пыма хăнăхаççĕ |
| - Аффикссенчи вăрăм хупă сасăсем | Çыру | Çырура сăмах йĕркине тĕрĕс тытса пыма хăнăхаççĕ |
| - Пуплевре пĕрпекленекен хупă сасăсем | Коллаж | Коллаж хатĕрлеме вĕренеççĕ |
| - Ӳ тата ю сас паллисемпе çырура тĕрĕс усă курасси | Палăртуллă вулав | Кĕске пауза тума хăнăхаççĕ |
| - Ю сас паллине çырмалли условисем | Тезис | Тезис çырма хăнăхаççĕ |

| | | |
|---|---|---|
| - Ӳ сас паллине хупă сас паллисем хыççăн тăнă чухне тĕрĕс палăртасси тата çырасси | Палăртуллă вулав | Кĕске тата вăрăм пауза тума хăнăхаççĕ |
| - Чи аслă учреждением ячĕсене çырасси. Географи ячĕсене çырасси | Палăртуллă çырав | Учитель каланă май кĕскен çырма хăнăхаççĕ |
| - Хисеплĕ ятсене, орден-медаль ячĕсене тĕрĕс çырасси | Доклад | Уйрăмшарăн тухса калаçма хăнăхаççĕ |
| **Пунктуаци йăнăшĕсем** | | |
| - Точка, ыйту палли, кăшкăру палли | Ыйтусемпе хуравсемлĕ калаçу | Ыйтусемпе хуравсемлĕ калаçу йĕркелеме хăнăхаççĕ |
| - Нумай точка | Тишкерӳ | Текстри нумай пăнчăсене тишкерме вĕренеççĕ |
| - Запятой, точкăпа запятой | Калаçу | Шухăша йĕркелесе çырма хăнăхаççĕ |
| - Икĕ точка, тире | Презентаци | Компьютерпа ĕçлеме, слайд хатĕрлеме хăнăхаççĕ |
| - Скобка, кавычка | Презентаци | Компьютерпа ĕçлеме, слайд хатĕрлеме хăнăхаççĕ |
| **Грамматика йăнăшĕсем** | | |
| - Подлежащипе сказуемăй çыхăнăвĕ | Тишкерӳ | Текстпа ĕçлеме хăнăхаççĕ |
| -Тĕрлĕ падежри япала ячĕсем | Тĕпчев | Япала ячĕсене тĕрлĕ падежра лартса тĕпчеççĕ |
| Паллă ячĕпе хисеп ячĕсен формисем | Калаçу | Предложенисене тĕрĕс йĕркелеме вĕренеççĕ |
| -Камăнлăх форминчи сăмахсем | Тĕпчев | Япала ячĕсене камăнлăх формине лартса тĕпчеме вĕренеççĕ |
| **Пуплев йăнăшĕсем** | | |
| -Предложени тытăмĕ, сăмахсен йĕрки | Интервью | Интервью мелĕпе усă курса предложенисене тĕрĕс йĕркелеме вĕренеççĕ |
| - Пуплев сăнарлăхĕ | Сăнав- шырав | Эпизодсене вуласа пуплеве сăнарлă тăваççĕ |
| - Пуплеври диалектизм | Шырав | Пуплеври диалектизмсенчен хăтăлма вĕренеççĕ |
| - Тавталоги | Ăнлантаруллă калаçу | Çырăва çыпăçуллă тума хăнăхаççĕ |
| - Пуплев çыпăçулăхĕпе çыхăнулăхĕ | Доклад | Класс умĕнче тухса калаçма хăнăхаççĕ |
| **Логика йăнăшĕсем** | | |
| - Пуплеври предложенисен çыхăнăвĕ | Тишкерӳ | Предложенисене тĕрĕс йĕркелеме хăнăхаççĕ |
| - Текст пайĕсем | Сăнав | Текст пайĕсене тĕрĕс палăртма вĕренеççĕ |
| **Факт йăнăшĕсем** | | |
| - Факт йăнăшĕсем | Лекци-калаçу | Вĕрентекен лекцине итлеме, текст тума хăнăхаççĕ |

| | | |
|---|---|---|
| - Лексикӑри стиль уйрӑмлӑхӗсем | Калаҫу | Текстра стиль уйрӑмлӑхӗсене палӑртма вӗренеҫҫӗ |
| - Ҫыру ӗҫӗсенчи фактсем | Ҫыру | Ҫыру ӗҫӗсенчи факт йӑнӑшӗсене тупма вӗренеҫҫӗ |
| -Вӗреннине аса илни | Проект | Проект ҫырма вӗренеҫҫӗ |
| - Вӗреннине пӗтӗмлетни | Ыйтусемпе хуравсемлӗ калаҫу | Хутшӑну ӑсталӑхне вӑйлатаҫҫӗ |

**Тематика планӗ**

| №№ йӗркипе | Тема | Сехет |
|---|---|---|
| | **Орфографи йӑнӑшӗсем** | **14** |
| 1 | Ҫырури йӑнӑшсем | 1 |
| 2 | Вырӑс чӗлхинчен ҫыру урлӑ йышӑннӑ сӑмахсем | 1 |
| 3 | Б,г,д,ж,з,ц,щ,о сас паллисене ҫырасси | 1 |
| 4 | Вырӑс чӗлхинчи зь,сть,сь сасӑпа пӗтекен сӑмахсем | 1 |
| 5 | Вырӑс чӗлхинчен пуплев урлӑ йышӑннӑ сӑмахсем | 1 |
| 6 | Сӑмах тӗпӗнче вӑрӑммӑн илтӗнекен хупӑ сасӑсем | 1 |
| 7 | Сӑмахпа аффикс пӗрлешнӗ ҫӗрти вӑрӑм хупӑ сасӑсем | 1 |
| 8 | Аффикссенчи вӑрӑм хупӑ сасӑсем | 1 |
| 9 | Пуплевре пӗрпекленекен хупӑ сасӑсем | 1 |
| 10 | Ӳ тата ю сас паллисемпе ҫырура тӗрӗс усӑ курасси | 1 |
| 11 | Ю сас паллине ҫырмалли условисем | 1 |
| 12 | Ӳ сас паллине хупӑ сас паллисем хыҫҫӑн тӑнӑ чухне тӗрӗс палӑртасси тата ҫырасси | 1 |
| 13 | Чи аслӑ учрежденисен ячӗсене ҫырасси. Географи ячӗсене ҫырасси | 1 |
| 14 | Хисеплӗ ятсене, орден-медаль ячӗсене тӗрӗс ҫырасси | 1 |
| | **Пунктуаци йӑнӑшӗсем** | **5** |
| 15 | Точка, ыйту палли, кӑшкӑру палли | 1 |
| 16 | Нумай точка | 1 |
| 17 | Запятой, точкӑпа запятой | 1 |
| 18 | Икӗ точка, тире | 1 |
| 19 | Скобка, кавычка | 1 |
| | **Грамматика йӑнӑшӗсем** | **4** |
| 20 | Подлежащипе сказуемӑй ҫыхӑнӑвӗ | 1 |
| 21 | Тӗрлӗ падежри япала ячӗсем | 1 |
| 22 | Паллӑ ячӗпе хисеп ячӗсен формисем | 1 |
| 23 | Камӑнлӑх форминчи сӑмахсем | 1 |
| | **Пуплев йӑнӑшӗсем** | **5** |
| 24 | Предложени тытӑмӗ, сӑмахсен йӗрки | 1 |
| 25 | Пуплев сӑнарлӑхӗ | 1 |
| 26 | Пуплеври диалектизм | 1 |
| 27 | Тавталоги | 1 |
| 28 | Пуплев ҫыпӑҫулӑхӗпе ҫыхӑнулӑхӗ | 1 |
| | **Логика йӑнӑшӗсем** | **2** |
| 29 | Пуплеври предложенисен ҫыхӑнӑвӗ | 1 |
| 30 | Текст пайӗсем | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| | **Факт йăнăшĕсем** | **5** |
| 31 | Факт йăнăшĕсем | 1 |
| 32 | Лексикăри стиль уйрăмлăхĕсем | 1 |
| 33 | Çыру ĕçĕсенчи фактсем | 1 |
| 34 | Вĕреннине аса илни | 1 |
| 35 | Вĕреннине пĕтĕмлетни | 1 |